24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 10 ШАМАТКУН 8 (6033) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем 1942 çулти январĕн 1-мĕшпе 6-мĕш хушшинче тытса илнĕ трофейăсем

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçса, 1942 çулти январĕн 1-мĕшпе 6-мĕш хушшинче çакăн пек трофейăсем ТЫТСА ИЛНĔ: орудисем — 97, танксем—11, бронемашинăсем — 3, минометсем — 32, пулеметсем — 106, автоматсем — 50, винтовкăсем — 326, автомашинăсем — 86, мотоциклсем — 86, велосипедсем — 296, грузсем тиенĕ лавсем — 79, радиостанцисем — 23, снарядсем — 6.450 тата уйрăмăн 41 ещĕк снаряд, минăсем—300 ытла тата уйрăмăн 674 ещĕк мина, винтовка патронĕсем—309.000.

Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсенне 14 танк, 30 оруди, 6 самолет, 60 станковăй пулемет, 417 автомашина, горючи тултарнă 6 автоцистерна, çар грузĕсем тиенĕ 510 лав тата чугунçул çинчи икĕ эшелона ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ.

Январĕн 1-мĕшпе 6-мĕш хушшинче нимĕçсен офицерĕсемпе салтакĕсене 8.000 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

Çав вăхăт хушшинчех Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем халăх пурăнакан 130 пункта ытла нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Оборона Халăх Комиссариатĕнче

Пирĕн тăван çĕршывшăн, фашистла захватчиксене хирĕç пыракан нумай çапăçусенче артиллерин 440-мĕш, 471-мĕш, 555-мĕш, 274-мĕш полкĕсем, противотанковăй артиллерин 289-мĕш, 296-мĕш, 560-мĕш полкĕсем, 36-мĕш мотоциклетнăй тата çыхăнун 12-мĕш полкĕсем хăюллă та паттăр пулнине, дисциплинăллă та организованно пулнине кăтартса пачĕç. Фашистла захватчиксене хирĕç татти-сыпписĕр çапăçса, тăшман войскисене вĕсем пысăк çухатусем кӳчĕç тата хăйсем вăйлăн пырса çапнипе противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пычĕç, фашистла захватчиксене пĕр шеллемесĕр аркатса пычĕç.

Тăван çĕршывшăн нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче çирĕплĕхпе паттăрлăх кăтартнăшăн, дисциплинăллă та организованно пулнăшăн, çав полксен личнăй составĕ çапăçура геройлăх кăтартнăшăн—çӳлте асăннă полксенчен гвардейски полксем тунă. Уйрăмăн илсен:

1. Артиллерин 440-мĕш полкĕнчен — артиллерин 1-мĕш гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **А. И. Брюшанов.**

2. Артиллерин 471-мĕш полкĕнчен — артиллерин 2-мĕш гвардейски полкĕ—полк командирĕ майор **И. П. Азаренков.**

3. Артиллерин 555-мĕш полкĕнчен — артиллерин 3-мĕш гвардейски полкĕ — полк командирĕ майор **А. Соловьев.**

4. Артиллерин 274-мĕш полкĕнчен — артиллерин 4-мĕш гвардейски полкĕ — полк командирĕ полковник **А. И. Ротов.**

5. Противотанковăй артиллерин 289-мĕш полкĕнчен—противотанковăй артиллерин 4-мĕш гвардейски полкĕ — полк командирĕ майор **Ефременко.**

6. Противотанковăй артиллерин 296-мĕш полкĕнчен — противотанковăй артиллерин 2-мĕш гвардейски полкĕ—полк командирĕ капитан **М. Алешкин.**

7. Противотанковăй артиллерин 509-мĕш полкĕнчен — противотанковăй 3-мĕш гвардейски полкĕ—полк командирĕ подполковник **И. А. Герасимов.**

8. Противотанковăй артиллерин 760-мĕш полкĕнчен—противотанковăй артиллерин 4-мĕш гвардейски полкĕ — полк командирĕ майор **А. А. Пастушенко.**

9. 36-мĕш мотоциклетнăй полкран — 1-мĕш гвардейски мотоциклетнăй полк —полк командирĕ майор **Т. Т. Танасчишин.**

10. Çыхăнун 12-мĕш полкĕнчен — çыхăнун 1-мĕш гвардейски полкĕ — полк командирĕ майор **Летков.**

Асăннă полксене гварди ялавĕсем параççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленетпĕр

КАЛИНИНО. Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленсе ирттерес ĕçе ертсе пыма районра 7 çынтан оргкомитет уйăрнă. Оргкомитет ĕçе тытăнчĕ. Çак ыйтупа профсоюз организацисен руководителĕсене, комсомолăн пуçламĕш организацисен секретарĕсене пуxса канашлу туса ирттертĕмĕр. Ялсенче йĕлтĕр ĕçне вĕрентме ятарласа 18 çынна 60 сехетлĕ программăпа вĕрентсе кăлартăмăр. Халĕ вĕсем обществăллă инструкторсем пулса ĕçлеççĕ. Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе вырăнсенче тренировкăсем, ăмăртусем туса ирттереççĕ. Ăмăртусем Калининăри педучилищĕре, вăтам шкулта тата Ассакассинчи туллимар вăтам шкулта пулса иртнĕ. Çав вăхăтра ГТО значокĕн хĕллехи нормисене парассине организациленĕ. Кросра пулмалли çынсене подразделенисене—уйăраççĕ, вĕсен командирĕсене тупса оргкомитета çирĕплетме тăратаççĕ. Районра йĕлтĕрсене килте тăвас ĕçе йĕркеленĕ. Пурĕ 120 мăшăр йĕлтĕр туса хатĕрленĕ. Кроса хатĕрленес ĕç шкулти организацисенче аванрах пырать.

КАДЫКОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Районри профсоюз тата комсомол организацийĕсем кроса хатĕрленме тытăнчĕç. Ĕçе районри оргкомитет ертсе пырать. Кроса хатĕрленесси шкулсенче аван пырать. Кашни шкултах 30—40-шер мăшăр йĕлтĕр пур. Вĕсемпе ăмăртусем, тренировкăсем туса ирттереççĕ. Чурачăкри вăтам шкулта 20 çын, Çĕнĕ Мăратри туллимар вăтам шкулта 25 çын хутшăннă. Районĕпе килте 70 мăшăр йĕлтĕр тунă. Йĕлтĕрçĕсен кросне хатĕрленес ĕç районра мĕнле тăни çинчен январĕн 10-мĕшĕнче ВЛКСМ райкомĕн пленумĕ сӳтсе-явать.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене тунă пулин те, туса çитерейменнисем сахал мар-ха. Кросра пулмалли çынсене подразделенисене отделенисене, взводсене, ротăсене уйăрса пĕтереймен, медицина енĕпе пăхса тухас ĕç те начартарах тăрать.

Кроса ялсоветсенче те ирттерме шутлатпăр. Çапла вара пирĕн 21 куст пулать. Кашни кустах ВЛКСМ райкомĕн представителĕсене яратпăр. Анчах халь судьясен коллегийĕсене тупса çирĕплетсе çитереймен-ха. Вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхпа хатĕрленсе йĕлтĕрçĕсен кросне организованно ирттерме тăрăшатпăр.

МАРКОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

Елчĕк районĕнчи комсомол организацийĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртусем, кроссем туса ирттерес тĕлĕшпе опыт пур. Пĕлтĕр Хĕрлĕ Çар 23 çул тултарнă ятпа пулнă кроса комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем 9 пин çын хутшăннă. Йĕлтĕр—çамрăксен юратнă спорчĕ пулса тăчĕ.

ВЦСПС тата ЦК ВЛКСМ кăçал та Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросне туса ирттерме йышăннине районри комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем хаваслăн кĕтсе илчĕç. Часах хатĕрленме тытăнчĕç. Районра 10 çынтан оргкомитет тунă. Унта чи лайăх йĕлтĕрçĕсене кĕртнĕ. Судьясен коллегисене туса çирĕплететпĕр. Çак кунсенче 26 комсомолец-йĕлтĕрçĕсем 60 сехетлĕ программăпа курс пĕтерчĕç. Вĕренсе тухнисем йĕлтĕр спорчĕпе ĕçлекен обществăллă инструкторсен ятне илчĕç. Халĕ вĕсем пурте профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросне хатĕрленес ĕçе ертсе пыма ялсене тухса кайнă.

ВЛКСМ райкомĕн решенийĕ тăрăх, декабрĕн 13-мĕшпе 27-мĕш хушшинче пур пуçламĕш организацисенче те, çавăн пекех шкулсенче те йĕлтĕрлĕ ăмăртусем пулса иртрĕç. Унта комсомолецсемпе пионерсем тата союзра тăман çамрăксем 7 пин çын хутшăннă.

Кроса хатĕрленес тĕлĕшпе Гаврилов, Колсанов, Пыркин комсомолецсем-обществăллă инструкторсем аван ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсене çирĕплетсе панă ялсенче темиçе хут та йĕлтĕрлĕ ăмăртусем, походсем туса ирттернĕ.

Зингеров комсомолец пуçарнипе сĕтел-пукансем тăвакан мастерской йĕлтĕр тăвас ĕçе тытăнчĕ. Вăл хăй парник тата йĕлтĕр тума кирлĕ ытти инвентарьсене тунă. Мастерской 400 мăшăр йĕлтĕр туса кăларнă та ĕнтĕ.

Эпир çитес кроса çамрăксене пурне те хутшăнтарма тăрăшатпăр.

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсен кросне отлично ирттерсе хамăр организованноçа, тӳсĕмлĕхе кăтартар.

А. КРАСНОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 7-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем противника Хĕвеланăç еннелле хăваласа пынă, çĕнĕрен малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутрах **Мещовск** хулине, йышăнса илнĕ. Çапăçусем пынă вăхăтра противник пысăк çухатусем тӳснĕ.

Январĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсенне 11 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 2 самолет пĕтнĕ.

Январĕн 7-мĕшĕнче Мускав патĕнче зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсенне 2 самолет персе антарнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн пĕр авиачасть январĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсенне 5 танк, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 170 яхăн автомашина, боеприпассем тиенĕ 130 лав ытла, 5 трактор пĕтерсе тăкнă тата противник пехотин 5 ротине çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Боровск хулине йышăнса илнĕ чух пирĕн чăссем противникăнне 1200 автомашина, 40 оруди, 5 танк, 60 миномет, 44 пулемет, танка хирĕç пемелли 35 пăшал, 17.000 снаряд, 22.000 мина, 200 мотоцикл, 220 велосипед тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче çапăçакан пирĕн часть, противника хирĕç хаяррăн çапăçса, нимĕçсен 5 танкне, пулеметсен 4 йăвине, 2 орудине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Противникăн 2 батальонĕ фронт еннелле куçса пыни çинчен пирĕн разведка пĕлтернĕ. Судаков юлташăн артиллери дивизийĕ (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) малти позицисем патне куçса, тăшман колонни çине персе тăнă. Нимĕçсен нумай салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ, ыттисене сапаласа янă.

* * *

Фронтăн малти линийĕсем еннелле куçса пыракан Н-ски чăрри лавсем çине нимĕçсен 50 автоматчикĕ тапăннă. Кĕçĕн лейтенант Симоновский юлташ фашистсене отпор парассине хăюллăн организациленĕ. Кĕске вăхăт хушшинче пынă çапăçу хыççăн нимĕçсен 30 вилли çул çине выртса юлнă, ыттисем тарнă.

* * *

Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче çапăçакан, М. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ икĕ кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ, автомобильсем юсакан базăна пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсенне 219 автомашина, 9 трактор, 5 полевой оруди, 4 зенитнăй оруди пĕтерсе тăкнă, боеприпассем турттарса пыракан эшелона ӳпĕнтерсе янă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 40 çынна ытла вĕлернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче вĕлернĕ нимĕç обер-ефрейторĕ Вельтер Вейбель çумĕнче Берлина Фриц Клауг патне яма хатĕрленĕ çырăва тупнă. Унта çапла çырнă: «Кунта сысналлла сивĕ тăрать,— çырать Вейбель.—Вырăссем самолетсемпе тата танксемпе пĕрле тăвакан кашни кунхи атакăсем пире хавшатса çитерчĕç. Ĕненĕр, кунта мĕн пулса иртнине эпĕ тӳсме пултараймастăп. Нумайĕшсем кунта нервсем пăсăлса кайнипе чирлереç. Пирĕн ротăра пĕтĕмпе те 3 пулеметчик çеç тăрса юлчĕ, ыттисене вĕлерсе пĕтернĕ тата амантнă. Час-часах хамран çапла ыйтатăп: хăçан мана черет çитĕ?»

* * *

Мускав облаçĕн Руза районĕнчи Высоково ялĕнче нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тĕлĕнмелле тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр.

«А К Т

1941 çулти декабрĕн 18-мĕшĕнче, эпир аялта алă пуснă политрук Дунин, сержант Семкович, красноармеецсем Коваль тата Арсентьев Мускав облаçĕн Руза районĕнчи Высоково ялĕн тулашĕнче мирлĕ пурăннă çынсен 14 виллине тупрăмăр. Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн тата ялти граждансенчен тĕплĕн ыйтса пĕлнĕ тăрăх çакна палăртнă: 1941 çулти декабрĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсем чарăнса тăнă Пелагея Павлова гражданкăн çуртĕ çине паллăмар çын граната ывăтнă. Граната ванчăкĕ лекнипе нимĕçсен пĕр салтакĕ вилнĕ, тепри аманнă. Çав каçхинех фашистсем ялти 12 арçына, 14 çулти подростока Духова тата Пелагея Павловăна тытса арестленĕ.

Арестленисене нумайччен асаплантарса хĕн кăтартнă хыççăн ял тулашне илсе кайнă та пулеметсенчен персе вĕлернĕ. Нимĕнле айăпсăрах асаплантарса вĕлернĕ граждансен ӳчĕсем 3 эрне хушши юр çинче выртнă. Хăйсем вĕлернĕ çынсене пытарма фашистсем ирĕк паман. Çакăн çинчен акт çыртăмăр.

Политрук **Дунин,** сержант **Семкович,** красноармеецсем **Коваль** тата **Арсентьев.** Немеровск ялсовет председателĕ **Димитриев** акта çирĕплетсе алă пуснă».

* * *

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Дон çинчи Ростов хулипе Ростов облаçĕнчи районсенчи хуçалăхпа культурăллă пурнăçа хăвăрт йĕркене кĕртсе пыраççĕ. Государствăпа кооперацин çĕршер предприятийĕсем ĕçлеме тытăннă та ĕнтĕ.

Хуласенче водопроводсем ĕçлеме пуçланă, электричество çуттисем çутăлнă, трамвайсемпе троллейбуссем çӳреççĕ, мунчасем, суту-илӳ предприятийĕсем, кино, театр, библиотека тата читальня, пуçламĕшпе вăтам шкулсем, ремесленнăй шкулсем уçăлнă. Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем вăрлăх фончĕсене пысăк çĕкленӳпе пухаççĕ, тракторсемпе ялхуçалăх инвентарĕсене юсаççĕ, трактористсемпе комбайнерсен çĕнĕ кадрĕсене вĕрентме пуçланă, вĕренекенсем хушшинче уйрăмăнах çамрăк арçынсемпе хĕрсем нумай.

Январĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, пĕр кун хушши çапăçса, нимĕçсене халăх пурăнакан 6 пунктран хăваласа кăларнă, противника пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн боецсем йышăнса илнĕ халăх пурăнакан пĕр М. пунктра кăна тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 400 виллине тупнă, вĕсем хушшинче пуринчен ытла финсем пулнă.

Фронтăн тепĕр участокĕнче фашистсен ӳсĕр салтакĕсен батальонĕ психически атака тума тăнă, анчах та пирĕн артиллери вучĕ вĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Левшин лейтенантăн танк экипажĕ пĕр çапăçура нимĕçсен 3 танкне, пулеметсен 5 йăвине, 4 минометне пĕтерсе тăкнă тата противник автоматчикĕсен пысăк ушкăнне пере-пере пăрахнă.

* * *

Дмитриев лейтенантăн автоматчикĕсем Н. ялĕшĕн пынă çапăçура (Хĕвеланăç фрончĕ) тăшман салтакĕсене 200 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пĕр çапăçура (Калинин фрончĕ) пирĕн рота тăшман дзотĕнчен персе тăракан пулеметăн вăйлă вучĕ айне лекнĕ. Герой-красноармеец Подерин юлташ çав дзот патне шуса çитнĕ те хăй кĕлеткипе амбразурăна хупласа хунă. Пулемет пеме чарăннă. Рота атака пуçласа янă та тăшмана çĕмĕрсе тăкнă.

* * *

Нимĕç захватчикĕсен тылĕнче кĕрешекен совет партизанĕсем тăшманăн çĕр çинчи войскисене кăна мар, унăн авиацине те сиен кӳреççĕ. Çакна фашистсем хăйсем те ирĕксĕрех йышăнаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, нимĕçсен 16-мĕш çарне панă 35-мĕш номерлĕ приказран илнĕ пĕр сыпăк: «Партизансем пирĕн тылра самолетсене çĕмĕрес тĕлĕшпе хăйсен ĕçне вăйлатнă пирки çакăн пек приказ паратăп: курьерсен çулсăр участокĕсем тĕлĕнче вĕçсе çӳремелле мар, мĕн май килнĕ таран пысăк çулсем тĕлĕнче вĕçме тăрăшмалла».

* * *

Нимĕçсен 26-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи артиллерин 26-мĕш полкĕнчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Маркес допросра çапла каласа панă: «Вăрçă пуçланнăранпа 26-мĕш дивизи хăйĕн личнăй составĕнчен 70 процента çити çухатнă. Пысăк çухатусем 77-мĕш пехотнăй полк тӳснĕ. Ку полкра нумай ротăсенче мĕн пурĕ те 15-шер салтак кăна шутланать. Çухатусем ӳссе пынă май салтаксем вăрçă пирки ӳпкелешни тата тарăхни те сарăлсах пырать».

* * *

Мазикино ялĕнчен каялла тухса кайнă чухне нимĕçсен фашистла тискер кайăкĕсем мĕнпур пӳртсене пĕтĕмпех çунтарса янă, пушара сӳнтерме пыракан хресченсене пере-пере вĕлернĕ. Çав ялти хресченĕнне — Шматова хĕрарăмăнне вĕсем 4 ачине çунтарса янă. Мясоедово ялĕнче гитлеровецсем пĕр сарая 12 хĕрарăма хăваласа хупнă, çакăнта ирĕксĕрлесе пусмăрланă та унтан пурне те персе пăрахнă.

* * *

Промышленность предприятийĕсенчи рабочисемпе инженерно-технически работниксем государствăн средствисемпе материалĕсене перекетлессишĕн тăрăшаççĕ. Карагандăри 26-мĕш №-лĕ шахта коллективĕ, çĕркăмрăкĕн хăйне ларакан хакне йӳнетсе, 458.000 тенкĕ перекетленĕ. ОХИ нефть промыслисенче (Сахалин облаçĕ) рационализаторла вуншар сĕнӳсене пурнăçа кĕртнĕ, вĕсем нумай пин тенкĕ перекетлесе хăварма май параççĕ. Азербайджан ССР-чи тир-сăран завочĕсенче тир тунă çĕрте хаклă тăракан типçусемпе тата выльăх-чĕрлĕх çăвĕсемпе усă курнă. Пĕр завода илсен те, унта кунсерен 120 килограмран кая мар çу расходланă. 1-мĕш №-лĕ тир заводĕнчи технологсем Петросянпа Ашрафян нефтьрен синтетически çу кăлармалли май шутласа тупнă. Çав çăва пĕр килограмм тума мĕнпурĕ те 40 пус кăна тухать. 1-мĕш №-лĕ завод çулталăкра 200.000 тенке яхăн перекетлесе хăварать.

Январĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 8-мĕшĕнче фронтăн чылай участокĕсенче пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă. Противник оборонăн çĕнĕ рубежĕсенче çирĕпленсе ларма хăтланнине пĕтерсе пырса, пирĕн чăсcем çĕнĕрен малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Январĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 11 самолет мар, 23 самолет пĕтерсе тăкнă.

Январĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне 11 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 4 самолет пĕтнĕ.

* * *

Январĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 12 танкне, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 460 автомашинине, 7 орудине прислугисемпе пĕрле, боеприпассем тиенĕ 210 лавне ытла, горючи тултарнă автоцистернине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 30 вагона вут тĕртсе çунтарса янă, чугунçул линине чылай çĕрте аркатса тăкнă, противникăн пехотине 6 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç пĕр кун хушши çапăçса, халăх пурăнакан 19 пункта ирĕке кăларнă тата нимĕçсенне 3 йывăр танк, 4 оруди, 36 автомашина, 5 тягач, 2 прицеп, пулеметсемпе автоматсем тата винтовкăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн боецсем, нимĕçсене чугунçул станцинчен хăваласа кăларса, нумай трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра — 11 оруди, 6 пулемет, 300 велосипед, 1000 снаряд, электрооборудованисемпе танксем тиенĕ чугунçул эшелонĕ.

* * *

Синюшкин юлташăн подразделенийĕ, Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, противникăн тылне шăвăнса кĕрсе, фашистсен часĕсенчен пĕрин çине кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе вуншар çынна вĕлерсе пĕтерсе, пирĕн боецсем нимĕçсенне 13 пулемет, 2 миномет тата 50 винтовка тытса илнĕ.

* * *

Автоматчиксен взвочĕн командирĕ Бирюков юлташ юлашки çапăçура тăшманăн 3 блиндажне гранатăсем пăрахса сирпĕнтернĕ, нимĕçсен тарса хăтăлма хăтланакан салтакĕсене автоматран пере-пере вĕлернĕ. Çав çапăçура Бирюков юлташ пĕтĕмпе 16 фашиста вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Партизансен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ Харьков облаçĕн районĕсенчен пĕринче противникăн тылĕнче активлăн кĕрешет. Нимĕçсем йышăнса тăракан яла систермесĕр пырса кĕрсе, партизансем пĕр сарая вут тивертнĕ. Унта фашистсен нумай салтакĕсем вырнаçса тăнă, çавăн пекех тата боеприпассем усранă пулнă. Гитлеровецсем, вут-кăвартан çăлăнас тесе, сарайран чупса тухма тытăннă та партизансен тĕл тивекен пульлисем айне лекнĕ. Боеприпассем взрыв пулса сирпĕннипе вуншар нимĕç пĕтнĕ. Тепĕр кунне мухтавлă совет патриочĕсем, нимĕçсен отрячĕ çине пырса тапăнса, 10 салтакпа офицера пĕтерсе тăкнă. Декабрĕн юлашки кунĕсенче партизансен отрячĕ, Харьков хулине шăвăнса кĕрсе, унта Дзержинский урамĕнче пĕр çурта взрыв туса сирпĕнтернĕ. Çав çуртра нимĕçсен офицерĕсем вырнаçса тăнă пулнă. Взрыв пулнипе нимĕçсен генералĕ тата 9 офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Гитлер совет войскисен вут-çулăмĕ айне пĕтме хăваласа янă нимĕç салтакĕсем, хăйсен çуллахи çĕтĕк-çатăк эрзац-тумтирĕсемпе сивĕре шăнса хытăркаканскерсем, совет листовкисене ытларах та ытларах кăмăлласа вулама тытăнаççĕ. Пирĕн листовкăсене нимĕç салтакĕсем хăйсен çырăвĕсемпе пĕрле Германие ăсатаççĕ. Çак япала питех те сарăлса кайнă пирки нимĕçсен командованийĕн ирĕксĕрех ятарласа приказ кăларма лекнĕ. Çапла, сăмахран, нимĕçсен 34-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 88-мĕш пехотнăй полкăн штабĕ кăларнă приказра, пирĕн войскăсем тытса илнĕскерĕнче, çапла каланă: «Çапăçу хирĕнчен каякан почтăна тĕрĕсленĕ чухне çырусен ăшĕнче вырăссен листовкисене тупнă. Листовкăсене çавăн пек майсемпе ăсатакансем пропаганда саракан çынсем пулса тăраççĕ, вĕсене питех те хаяррăн айăпламалла пулать. Вырăссен листовкисене Германие ăсатассине пур майсемпе те чарса лартмалла».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Ганс Штеммер нумаях пулмасть хăйĕн пиччĕшĕ Макс Штеммер ефрейтор патне çапла çырнă: «Юлашки вăхăтра вырăссем пире питех те вăйлăн тип мунча кĕртрĕç. Вĕсем пире пĕрмаях атакăлаççĕ. Пирĕннисенчен нумайĕшĕсем çухалчĕç: вĕсем тыткăна лекрĕç пулмалла. Якоб Венгерпа Людвиг Шмидт вилнĕ. Шмидтăн пиччĕшĕ Зекф та пĕтнĕ. Хăвах куратăн ĕнтĕ, пирĕн кунта ĕçсем сирĕн патăрти майлах...»

* * *

Ленинград облаçĕнчи Чудово поселокĕнче нимĕçсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене сысна ĕрчетмелли совхоз пулнă çĕрте сысна витине хупса хунă. Çавăнтах нимĕçсем вырăнти халăха та хăваласа пухнă. Çав çуртра чӳрече кантăкĕсем те, алăксем те çук. Кунта хăваласа пухнă совет çыннисене çимелли нимĕн те памаççĕ. Кунсерен кунта темиçешер çын выçăхса вилет.

* * *

Финляндия Данире илнĕ çăва, Берлинран распоряжени панă тăрăх, Германие ăсатнă. Гитлеровецсем çавăн пек çаратса пынине пула Финлянди халăхĕ хушшинчи выçлăх кунран-кун ӳссе пырать. Нумай хуласенче халăха нимĕнле продуктсем те памаççĕ. Кускио хулинче юлашки эрнере выçă аптăраса 18 ача вилнĕ.

Январĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, противника хирĕç хаяр çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан 4 пункта йышăннă тата 19 пулемет, тупă, 2 миномет, 160 винтовка, 8.000 патрон, 5 радиостанци тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Селезнев юлташăн чăçĕ противника халăх пурăнакан 3 пунктран хĕссе кăларнă, нимĕç батальонĕн штабне çĕмĕрсе тăкнă, 2 танка пĕтерсе тăкнă тата пĕр оруди, миномет, 27 пулемет, 3 мотоцикл, 8.000 снаряд тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна яхăн вилсе юлнă.

* * *

Мещовск хулине йышăнса илнĕ чухне пирĕн боецсем, малтанлăха шута илнĕ тăрăх, 16 оруди, 1000 снаряд, 13 автомашина, 20 мотоцикл, пулеметсемпе винтовкăсем тата ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Противник пехотин 2 батальонне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Бияк юлташăн боецĕсем (Ленинград фрончĕ), противник тылĕнче 5 кун хушши çапăçса, тăшманăн 20 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 10 лавне пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Старший сержант Лушников, сержантсем Краснобородкинпа Емельянов ертсе пыракан противотанковăй орудисен расчечĕсем пĕр кун хушшинче тăшманăн 3 танкне персе çĕмĕрнĕ. Çав кунах, хăйĕн орудине усă вырăна илсе тухса вырнаçтарса, Лушников юлташпа Якименко наводчик тӳрех персе тăшманăн салтакĕсене 40 çынна ытла тата 4 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Йĕлтĕрпе çӳрекен партизансен К. юлташ ертсе пыракан отрячĕ, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, вунă кун хушшинче чылай участоксенче чугунçул линине сирпĕнтерсе янă, çар пурлăхĕсем турттарса пыракан икĕ эшелона тӳнтерсе янă, тăшманăн автоколоннине тата нимĕçсен вуншар салтакĕсене пĕтерсе тăкнă. К. ялĕнче отряд нимĕçсен подразделенине атакăланă. Çуртсенчен чупса тухнă фашистсене партизансем автоматсенчен пере-пере

Малалли 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

вĕлернĕ. С. ялĕ патĕнче партизансем финсен карательнăй отрячĕ çине тапăннă. Хире-хирĕç персе тăнă вăхăтра партизансем белофиннсен 22 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕ Рихард Биргнер хăйĕн Мюнстер хулинче пурăнакан тăванĕсем патне çырнă çырура çапла пĕлтерет: «Вилнĕ салтаксен спискĕ кашни кунах ӳссе пырать. Пире виçĕ хутчен салтаксем хушса пачĕç, анчах вĕсене ĕнтĕ вĕлерсе пĕтернĕ, пирĕн каллех салтаксем нумай çитмеççĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир резервистсене илме пăрахрăмăр. Пирĕн резервсем чăнах та пĕтсе пыраççĕ пулмалла. Эпир пурте кунта вилетпĕр пулĕ, тесе шутлатăп эпĕ».

* * *

Иоганн салтак патне унăн палланă хĕрарăмĕ Мюленбах ятлă вырăнтан çапла çырать: «...Мюленбахра пур арçынсене те армине илчĕç. Кунта пурте вилнĕ пекех туйăнать...» Иозеф салтака унăн палланă хĕрарăмĕ Рези Мюльбауэр Ветцельбергран çапла пĕлтерет: «Нумай çынсем ĕнтĕ хăйсен пурнăçĕсене çухатрĕç. Пирĕн патра никам та юлмарĕ: тыткăна лекнĕ французсемпе поляксем кăна.»

* * *

Ленинград облаçĕнчи Червинная Лука ялĕнче нимĕç бандичĕсем пĕр айăпсăр 5 хресчене, çав шутрах 58 çулти Евдокимова та, тытса чарнă. Фашистсем хăйсен жертвисенчен темĕнле те мăшкăлланă, вĕсене хăйсем валли вĕрenсем тĕвĕлесе хатĕрлеттернĕ, кайран вара çакса вĕлернĕ.

* * *

Германипе Итали оккупанчĕсем Грецирен халĕ те продовольстви, табак тата эрех турттарса тухаççĕ. Çĕршывра выçлăх тăрать. Январь уйăхĕнчен пуçласа пĕтĕм Грецире çăкăр памалли кормăсене каллех пĕчĕклетнĕ. Январĕн 3-мĕшĕнче Грецири Салоники портĕнчи рабочисем Германи пароходĕ çине продовольстви тиессине хирĕç тăнă. Çакна май рабочисемпе оккупантсем хушшинче çапăçу пулса иртнĕ.

Малта пыракансене премиленĕ

СĔНТĔР. Иртнĕ çулсенче пушартан сыхланассипе лайăх ĕçлесе пынăшăн декабрь уйăхĕнче Чăваш АССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн приказĕ тăрăх республикăра малта пыракан ялсоветсемпе колхозсен председателĕсене, ирĕклĕ пушар дружинисен начальникĕсене тата. уйрăм çынсене 39 çынна 100 тенкĕрен пуçласа 250 тенкĕ çити укçа парса премиленĕ.

Ирĕклĕ пушар дружинисен начальникĕсене П. Трошкин (Кольцовка колхозĕ, Вăрнар, р.), И. Тимофеев («Динамо» колхоз, Куславкка р.), В. Ефремов («Колос» колхоз, Сĕнтĕр р.) юлташсене 200-шер тенкĕ парса премиленĕ.

Ялсоветсемпе колхозсен председателĕсенчен Н. Тарасов (Мăн Чураш ялсовечĕ, Советски р.), Е. Иванов (Тăрмăш ялсовечĕ, Тăвай р.) юлташсене 250-шар тенкĕ, Т. Данилов (Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, Шупашкар р.), А. Ширкин («Искра» колхоз председателĕ, Çĕмĕрле р.), З. Минаев («Маяк» колхоз председателĕ, Чкаловски р.), 200-шер тенкĕ преми илме тивĕçлĕ пулнă. **В. И.**

В. М. Молотов юлташ панă нота çинчен Англи хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Германи влаçĕсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕсем çинче пур çĕрте те халăха çаратса юхăнтарни çинчен тата тискер кайăкла çавтери хăрушă ĕçсем туни çинчен» Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ янă нота пирки Англири хаçатсемпе радио питех те нумай çыраççĕ тата калаççĕ. «Дейли мейл» хаçат çав темăпа пĕрремĕш страницăра статья пичетлесе кăларнă. Статьяра: нимĕçсем Российăна кӳнĕ мĕнпур сиенсемшĕн пĕтĕмĕшпех ответ тытма тивĕçлĕ, тесе çырнă. «Дейли геральд», «Ньюс кроникл», «Дейли экспресс» хаçатсем Молотов юлташăн нотинчен илнĕ уйрăм вырăнсене пысăк заголовоксемпе пĕрремĕш страницăсенче пичетлесе кăларнă. Çавăн пекех «Дейли телеграф энд морнинг пост» тата «Таймс» хаçатсем те нота çинчен тĕплĕн çырса пĕлтереççĕ.

«Дэйли мейл» хаçат хăйĕн комментарийĕсенче çапла кăтартса панă: «Молотовăн ноти Англире пурне те питех те хытă хумхантарса ячĕ. Çав нота нимĕçсене айăпласа çырнă чи хаяр акт пулса тăрать, халиччен пĕр наци хирĕç те çавăн пек айăпласа çырман. Нимĕçсем пĕр хуларан тепĕр хулана, пĕр ялтан тепĕр яла çитсе тунă тискер кайăкла ĕçсем çинчен нотăра тĕплĕн çырса кăтартнă. Çаратнисене, ирĕксĕрлесе пусмăрланисене, вĕлернисене тата вут тĕртсе çунтарнисене пурне те тĕрĕс, пĕр пытармасăр тӳррĕн кăтартса панă».

Нимĕçсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене çаратаççĕ

ЛОНДОН, январĕн 8-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви Швеци пичечĕ пĕлтернине илсе кăтартса парать. Çав пĕлтерӳре çапла каланă: Германин Российăри сăрĕпе аптăракан войскисене ăшă тумтирсем тупса парас тесе, нимĕçсем тыткăна лекнĕ çар çыннисен тумтирĕсене хывса илеççĕ. Сен-Денири (Франция) концентрациллĕ лагерьте нимĕçсен влаçĕсем лагере лекнĕ çынсен япалисене ухтарса тухнă. Лагерьте тытса усракан çынсем хушшинче нумайĕшĕсем — англичансем, вĕсенчен мĕнпур ăшă япаласене туртса илнĕ.

Хĕрлĕ Çарăн çапăçури операцийĕсем çинчен ютçĕршывсенчи пичет мĕн çырать

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн умстатьинче çапла çырнă: вырăссем çавтери анлă фронт тăлккăшĕнче хăйсен çĕрĕ çинчен тăшмана хăвалаççĕ, хăйне никам çĕнтерейми тесе шутлакан армие вĕсем каялла чакарса пыраççĕ. Çакă уççăнах курăнать: Германи çарĕ каялла чакни стратеги тĕллевĕсемпе чакни мар, вăл нимĕçсене питĕ хакла ларакан йывăр операци пулса тăрать. Вырăссем пуçарулăха нимĕçсенчен хăйсен аллине тытса илчĕç те унпала питĕ ăста усă кураççĕ. Пĕр уйăх хушшинче пĕтĕм картина улшăнса тăчĕ. Нимĕçсем пур çĕрте те каялла чакаççĕ. Германи çарĕн çын тата материалсем тĕлĕшĕпе çухатусем питĕ пысăк. Çавăн пек чакса пыни Германи çарĕпе халăхĕн шухăш-кăмăлне калама çук хытă пырса çапать, вĕсен кăмăлĕ-туйăмне чакарать. Вырăс çĕршывĕнчи сивĕ хĕл пуçланнă кăна-ха, вырăс çарĕсем шав малаллах куçса пыраççĕ.

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Дэйли телеграф энд морнинг пост» хаçат Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче ĕçсем мĕнле тăни çинчен умстатья пичетлесе кăларнă. Акă мĕн каланă çав статьяра: «Вырăссем, нимĕçсене татах чакарса, малалла куçса пыраççĕ. Нимĕçсен хăйсен пĕлтерĕвĕсем тăрăхах вĕсен ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитменнипе кăмăлĕсем пăсăлни, хăраса ӳкни сисĕнет. Икĕ эрне малалла эпир Гитлер Геббельса, нимĕçсен çарĕн хăйсенчен чылаях вăйлă противникпа хире-хирĕç тăрса çапăçма тиврĕ, тесе пĕлтерме хушни çинчен илтсессĕн, тĕлĕнсех кайрăмăр. Нацистсен ирĕксĕрех çакна йышăнас пулать. Германин верховнăй командованийĕ хăйĕн çарне мĕн-мĕн кирлĕ пулассине шута илсе çитереймен. Халĕ акă Германин ахаль те питĕ начар тумланнă граждăнĕсен хăйсен юлашки тумтирне çар валли пама тивет. Нацистсен партийĕн официальнăй органĕ Германи войскисем питĕ нумай пĕтеççĕ, тесе йышăнать. Германи влаçĕсем нимĕç войскисен положенийĕ питĕ йывăррине текех халăхран пытарса тăраймаççĕ. Нумаях пулмасть Германи командованийĕ дезертирсен йышĕ кунран-кун нумайланса пынă пирки приказ пичетлесе кăларнă.

«Дэйли мэйл» хаçат çапла çырать: Германи çарĕ вăйлă-ха, анчах нимĕçсен вăрçă планĕсем арканса кайнă тата вĕсен çарĕсене халĕ каялла чакарса пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ—Европăна хупăрласа илнĕ тĕттĕмлĕх витĕр курăнакан çутă пайăрки пулса тăрать.

СТОКГОЛЬМ, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Стокгольмри хаçатсем, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен пĕлтерсе, тăтăшах комментарисем парса пыраççĕ. Германи командованийĕн Совет Союзне хирĕç вăрçмалли планĕсем юрăхсăра тухса арканса кайрĕç, теççĕ вĕсем. «Стокгольм экстрабладет» хаçат çапла çырать: Гитлер Мускава часах туртса илетпĕр, Хĕрлĕ Çара аркатса тăкатпăр тесе тата темтепĕр каппайчăклăн пĕлтерсе хăйĕн ятне ячĕ. Событисем унăн сăмахĕсене юрăхсăра кăларчĕç. Вырăссен Ростов патĕнчи çĕнтерĕвĕсем нимĕçсен нефть патнелле туртăнакан çулне пӳлсе хучĕç. Çавă нефть кăларакан вырăнсене илесси вĕсен планĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Хĕрлĕ Çар пуçарулăха хăй аллине илсе пырать, вăл вырăнтан вырăна питĕ хăвăрт куçма пултарать, тăшмана питĕ хытă çапа-çапа аркатса пырать. Совет Союзĕ хăйĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк резервĕсемпе усă курса тата хăйĕн халăхĕпе çарĕ çавтери тачă çыхăнса тăрса пĕрлĕхлĕ пулнă пирки тăшмана хирĕç питĕ вирлĕн кĕрешет.

«Дагенс нюхетер» хаçат хăйĕн обзорĕнче СССР халăхĕсен çирĕп те тачă пĕрлĕхĕпе вĕсен шалти вăйĕ çинчен çырать. «Германия 200 миллионлă халăхăн пĕрлĕх фрончĕ умне пырса тăчĕ. Вырăссем тăшмана хирĕç çавăн пек вăйлă тăрасси тата кунран-кун малалла наступлени туса пырасси, паллах, тĕреклĕ тылсăр пулайрас çук. Вырăссен тылĕ нимĕçсем вăрçă пуçланă хыççăн татах та çирĕпленчĕ», — тенĕ хаçатра.

Ирĕке кăларнă Феодосире

КАВКАЗ ФРОНЧĔ, январĕн 6-мĕш. (ТАСС). Совет Информбюровĕ Феодосире нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна пĕтерсе тăкнă тесе пĕлтернĕччĕ. Хула урамĕсемпе тăкăрлăкĕсенче фашист йыттисен виллисем купаланса выртаççĕ. Акă нимĕç офицерĕн вилли выртать. Унăн пӳрнисенче темиçе ылттăн çĕрĕ. Кĕсъинчен сехетсем тухса ӳкнĕ, вăл сехетсем çинче Мускаври сехетсем тăвакан 2-мĕш заводăн марки. Пĕр кил хушшинче автомашинăсем тăраççĕ, вĕсене çаратса пухнă пурлăхпа тултарса лартнă. Кунта—сĕтел çине витмеллисем, занавескăсем, тӳшек çиттисем, çытар-минтерсем, хĕрарăм кĕписем, унтах бюстгалтерсем те пур. Анчах та çакă вăрă-хурахла çаратса пухнă япаласене нимĕçсем илсе кайма ĕлкĕреймен.

Феодосие пырса тухнă десант çарĕн комиссарне, батальоннăй комиссар Вайцмана хула çыннисен ушкăнĕ хупăрласа илнĕ. Вĕсем пурте çĕтĕк-çатăк çеç тумланнă. Нумайĕшĕ аран уткалаççĕ. Пичĕсем—ырхан, куçĕ айĕсем хуралса тăраççĕ. Кусем—чĕрĕ çынсем мар, çурри вилнĕ этемсем. Пĕр самант вĕсем шарламасăр тăраççĕ, унтан куççуллĕ куçĕсемпе пирĕн боецсене мăйран ытала-ытала илсе, вĕсене хăйсене хăтаракансене, хыттăн-хыттăн чуптăваççĕ.

Çак çынсенчен эпир хулара 8 эрне хушши нимĕçсем хуçаланса пурăннă вăхăтра пулса иртнĕ хăрушă ĕçсем çинчен пĕлетпĕр. Феодосие пырса кĕнĕ фашистсем чи малтанхи приказпа пĕтĕм хула халăхне хăйсен мĕнпур ĕçмеçимелли продукчĕсене тата ăшă тумтирĕсене васкасах нимĕçсене пама хушнă, паманнисене персе пăрахассипе хăратнă. Ку приказ фашистла ирсĕрсен малтанхи ĕçĕ пулнă. Тата темиçе кунтан вĕсен яланхи тискер ĕçĕсем пуçланса кайнă. Нимĕçсем нимĕн айăпсăр çынсенех персе вĕлерме тытăннă. Нумай çынна, «урăх çĕре куçарма» тесе, килĕсенчен чемоданĕсемпех чĕнсе тухнă. Çав чĕннĕ çынсем пурте пĕр вырăна пухăнсан, фашистсем вĕсен хушшинчен стариксене, хĕрарăмсене тата ачасене ушкăнăн-ушкăнăн уйăрса тăратнă та вĕсенчен мăшкăллама тытăннă, унтан пурне те персе вĕлернĕ. Çакăн пек вĕсем нумай çĕр çынна—вырăссене, украинецсене, еврейсене пĕтерсе тăкнă.

Унтан часах хулари ачасене шута илесси çинчен пĕлтернĕ. Регистраци тунă çĕре ачасене хăйсен амăшĕсемпе пĕрлех пыма хушнă. Хушамачĕпе ятне çырнă хыççăн ача тутине темĕнле сарă тĕслĕ шĕвек япалапа сĕрнĕ, ачасем вара çавăнтах ăнтăхса кайса вилнĕ. Тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен нимĕçсем çавтери тискеррĕн мăшкăлланă. Вĕсене асаплантарнă, нумайĕшне суранлантарса пĕтерсе сивĕ подвалсене хупса лартнă, ĕçме-çимелли нимĕн те паман. Выçăпа тата йывăр сурансемпе куллен 20—30-шар çын вилнĕ.

Кунта кăтартнисем фашистсем Крымăн илемлĕ хулинче Феодосире тунă мăшкăллă тискер ĕçсем çинчен кĕскен каласа пани кăна-ха. Икĕ уйăх хушши нимĕçсен аллинче тăнă вăхăтра пĕтĕм хула халăхĕ выçă пурăннă. Хăшпĕр телейлĕ çынсем кăна кунне 200-шер грамм мăкăнь вăрри илсе тăма пултарнă.

Нимĕçсем ĕçсе-çисе савăннă. Вĕсем виçĕ притон уçнă, унта вара хулари сĕршер хĕре хăваласа пухнă. Çĕнĕ çул кунне ирттерме нимĕçсем Феодосири чи лайăх çуртсене пухăнма шутланă. Кунта вĕсем елкăсем илсе пынă, хăйсен командованийĕнчен парнесем илнĕ. Вăл парнесем хушшинче: хутпала тирпейлĕн чĕркенĕ хура çăкăр татăкĕсем, мятнăй лепешка тултарнă пĕчĕк коробкăсем, пакет ăшне хунă эрзац-сахар текен япала—хура кăмрăк катăкĕсем, ирсĕр ӳкерчĕклĕ кĕнекесем пулнă.

Анчах та фашистсемшĕн çĕнĕ çула Феодосире кĕтсе илмелле пулмарĕ. Çĕнĕ çул ыран тенĕ чух пирĕн войскăсем вĕсене питех те лайăх тăхлан кучченеççемпе хăналарĕç.

Феодосие фашистсенчен тасатнă самантран пуçласа эпир унти пурнăçа юсама тытăнтăмăр. Совет организацийĕсем хулана йĕркене кĕртеççĕ, хула халăхĕ валли ĕçме-çимелли продуктсем илсе пыраççĕ; çуртсăр, хӳтлĕхсĕр юлнă çынсене çĕнĕ хваттерсем параççĕ.

Пирĕн Феодосия хулине хăтаракан çар чаçĕсем, пĕр пункт хыççăн тепĕр пункт тытса илсе, ăнăçлăн малалла çĕнтерсе пыраççĕ. Фашистсене Севастополь патĕнче тăракан Петров юлташăн чаçĕсем вăйлăн çапа-çапа аркатаççĕ. Нимĕçсем кунта та çынсемпе вăрçă материалĕсем тĕлĕшпе пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: çĕнĕрен пĕлтерекен хыпарсем илнĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем Минданао утравĕ (Филиппин) патĕнче Япони карапĕсене атакăланă чухне, малтан пĕлтернĕ пек мар, хытă сиенленĕ. Ку районри Япони флотĕнче 1 линкор, 5 крейсер, 6 миноносец, 12 подводнăй лодка тата 12 транспорт пулнă.

Малтан пĕлтернĕ пекех, линкор çине виçĕ бомба ӳкнĕ. Кунсăр пуçне пĕр миноносеца путарнă тата ытти карапсем çине те бомбăсем тĕл лекнисене палăртнă. Çакăн пирки хăшпĕр карапсем хытах сиенленнĕ тесе шутлама пулать.

Лусон утравĕ çинче çапăçусем Манила бухти районĕнче пынă. Çак районри укрепленисем çине, кунти Коррегидор утравĕпе Маниверли база çине, Япони самолечĕсем ĕнер каллех вăйлăн тапăнса нумай бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахасси 4 сехете пынă. Кунта японецсен 50 самолет пулнă. Бомбăсем пăрахнипе çуртсем ишĕлни, çавăн пекех аманнисемпе вилнисем те нумаях мар. Зенитнăй артиллери тăшманăн 7 самолетне сиенленĕ. Типĕ çĕр çинчи вăрçă ĕçĕсем, малтанхи кунсенчи пек мар, вăйсăртарах пыраççĕ. Япони войскисем Америкăпа Филиппин çарĕсен малти позицийĕсене çаплах хытă хĕсеççĕ.

Ытти районсенче паллă улшăнусемех çук.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕн коммюникинче çаксене кăтартса панă: январĕн 6-мĕшĕнче Çурçĕр фронтĕнчи Керак юханшывĕн анатри пайĕнче Япони войскисем хăйсен активлăхне питех палăртман. Фронтра нимĕнле улшăну та пулман. Январĕн 7-мĕшĕнче ирхине ирех фронтăн çак участокĕнче японецсем вăйлă атака тунă, ку атакăра броневтомобильсемпе усă курнă. Çапăçусем хыççăн японецсем пĕр пунктра Англи войскисен оборонин районне саваллланса кĕме пултарнă.

Япони авиацийĕ чылаях пысăк активлăх кăтартнă.

Селангорта пысăк операцисемех пулман. Пахантa участокĕнче Англи войскисем малтан палăртса хунă план тăрăх чакаççĕ. Январĕн 6-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Кланг пунктне атакăланă. Бомбăсем пăрахнипе пулнă сиенсем çинчен тата аманнисемпе вилнисем пулни çинчен нимĕнле хыпар та илмен. Сингапурта январĕн 6-мĕшĕнче сывлăшран тапăннине систерекен тревога панă, анчах та бомба пăрахнисем пулман.

Англин Рангунри командованийĕн коммюникинче çапла каланă: январĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрла иртнĕ хыççăнах Моумнон районĕнче тăшман сывлăшран тапăннине систерекен тревога пулнă. Тăшман самолечĕсем питех те çӳлтен вĕçсе пынă, анчах та вĕсене хăваласа янă. Январĕн 7-мĕшĕнче 1 сехет те 15 минутăра Япони самолечĕсем Рангун сывăхĕнчи аэродромсем çине пырса тапăннă. Ку тапăну вĕсемшĕн ăнăçлă пулман, пирĕн вилнисем те аманнисем те çук.

Австрали командованийĕн коммюникинче çаксене кăтартса панă: Япони авиацийĕ Австрали çĕрĕ çине виççĕмĕш хут январĕн 6-мĕшĕнче çĕрле пырса тапăннă. Ребаул сывăхĕнчи аэродром çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсенчен пулнăсиен пысăках мар. Вилнисемпе аманнисем çук. Хула районне пĕр бомба та ӳкмен. Каярахпа Японин 11 самолечĕ каллех Ребаул çине пырса тапăннă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Голланди Индийĕн хăшпĕр районĕсенче Япони самолечĕсем вĕçсе çӳренине асăрханă. Архипелаг утравĕсенчен пĕрин çине, Натура çине, Япони самолечĕсем пит çӳлтенех мар темиçе бомба пăрахнă. Граждăнла халăх хушшинчен пĕр çын йывăр аманнă. Çуртсем ишĕлмен. Голланди Индийĕн пĕр подводнăй лодкине пĕтнĕ тесе шутламалла.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Селангорта (Малайя) Япони войскисем англичансене Куала Лумпур еннелле хĕссе пыраççĕ. Январĕн 2-мĕшĕнче Япони войскисем пĕтĕм Кампара районне йышăнса илнĕ. Çав кунах Япони бойскисем Куантан районĕнче аэродром тытса илнĕ. Январĕн, 4-мĕшпе 5-мĕш кунĕсенче Японин тинĕс авиацийĕ бомбăсем нумай пăрахса Корредидор утравĕ çинчи çар сооруженийĕсене тата Маниверео базине çĕмĕрнĕ. Тăшманăн пĕр çар карапне сиенленĕ, 5 самолетне персе антарнă.

Январĕн 4-мĕшĕнче Давао утравĕ патĕнче Америка самолечĕсем Япони крейсерне пысăк мар сиен кӳнĕ. Лăпкă океан çинче японецсен пĕр подводнăй лодки шыва путнă.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕн коммюникинче çапла пĕлтернĕ: англичансен типçĕр çинчи çар отрячĕсем тата авиаци Аджедаби районĕнче çĕнĕрен ăнăçлă операцисем туса ирттернĕ, кунта вĕсем тăшманăн автотранспорчĕ пухăнса тăнă вырăнсене вирлĕн пыра-пыра çапнă. Çĕнĕрен тĕрĕслесе шутланă тăрăх, Бардия районĕнчи çапăçусенче англичансем 1804 нимĕçе (ку шутра 28 офицер) тата 5278 итальянеца (ку шутра 45 офицер) тыткăна илнĕ. Кусемсĕр пуçне тата суранланнă нимĕçсемпе итальянецсене 900 çын таран тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Каирти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бардия хулине илнĕ хыççăн, Хальфая ту каççине (перевалне) илессишĕн пыракан çапăçусем пуçланса кайнă. Ку тĕлте нимĕçсемпе итальянецсем çирĕппĕн вырнаçса ларнă. Киренаикăн хĕвелтухăç пайĕнче тăшман çак вырăнта çеç хирĕç тăма пултарать. Кунта çапăçакан нимĕçсемпе итальянецсен йышĕнче, Бардири пекех, 7—8 пин салтакран ытла мар тесе шутлаççĕ. Тыткăна лекнисем каласа панă тăрăх, Хальфаяра нимĕçсем Бардиринчен ытларах шутланаççĕ.

Англи авиацин ĕçĕсем

ЛОНДОН, январĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи самолечĕсем декабрь уйăхĕнче Европăра тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 70 объект çине мĕнпурĕ 176 хутчен вĕçсе пырса тапăннă. Çав операцисен вăхăтĕнче авиацишĕн юрăхлă лайăх çанталăк пулман. Çапах та операцисенчен нумайĕшне питĕ ăнăçлă туса ирттернĕ. Германин çар тата промышленность объекчĕсем çине, пурĕ 8 объект çине, 14 хутчен пырса тапăннă. Ку шута Вильгельмсгафен çине 4 хутчен тапăнни, икшер хут Кельн тата Эмден хулисем çине тапăнни кĕрет. Чи вăйлă тапăну декабрĕн 28-мĕшĕнче çĕрле пулнă. Ун чухне Дюссельдорф çине тапăннă.

Германи оккупациленĕ территорисенче Англи авиацийĕ пуринчен ытла противникăн порчĕсене, уйрăмах Германин çар карапĕсем тăракан Брест хулине атакăланă. Оккупациленĕ территори çинче мĕнпурĕ 18 объект çине 38 хутчен пырса тапăннă.

Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче 78 объект çине пурĕ 124 хут пырса тапăннă. Ку шутран 10 операцийĕ—Триполи çине пырса тапăнни. Аджедаби тата Барди çине 9-шар хутчен, Бенгази çине 8 хут, Дерна çине 7 хут пырса тапăннă. Кусемсĕр пуçне тата Итали карапĕсемпе порчĕсем çине тата икĕ хутчен Неаполь çине тапăннă.

Атлантика океанĕн çыранĕсем çывăхĕнче тинĕс хĕрринчи авиаци самолечĕсем противникăн 24 карапне путарнă е сиенленĕ.

Европăри тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çак операцисем вăхăтĕнче Англи авиацийĕн 226 самолечĕ пĕтнĕ, сывлăшри çапăçура противникăн 174 самолетне пĕтернĕ. Унсăр пуçне çĕр çинче тăшманăн чылай самолечĕсене пĕтернĕ тата тытса илнĕ.

Англичансем Норвеги çыранне çĕнĕрен пырса кайни

ЛОНДОН, январĕн. 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин çар карапĕсем противникăн Норвеги çыранĕнчи вăйĕсене хирĕç çĕнĕ операци туса ирттернĕ. Çăмăл карапсем Бергенпа Тронхейм хушшинчи фиорда пырса кĕнĕ. Противник вăйсăррăн хирĕç тăнă. Çав операцие тунă чухне çыран хĕрринчи пĕр суднăна путарнă, противникăн çыранри коммуникацийĕсене тата унăн консерва тăвакан фабрикине сиен кӳнĕ.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Хунань провинцинче, Чанша хулинчен çурçĕр енче Китай çарĕсем Японин Лаотаопа Люян юханшывĕсен районĕнче хупăрласа илнĕ войскисене хирĕç çапăçаççĕ. Çавăн пекех тата Чаншаран 50 километр çурçĕр еннерехри Мило шывĕ хĕрринче те çапăçусем пыраççĕ. Кунта Китай войскисем юханшыв урлă каçмалли майлă вырăна хăйсен аллине тытса илнĕ. Япония войскисем пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Иочжоу сывăхĕнче японецсем артиллерипе механизациленĕ войскăсен вăйлă чаçĕсене пухса тăратнă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар валли кирлĕ япаласем тăваççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Аслă Чурачăкри «Красный инвалид» промартель малтанхи вăхăтра йывăçран каскаласа хуçалăха кирлĕ япаласем тунă. Отечественнăй вăрçă пуçлансан, вăл вăрçă ĕçне кирлĕ япаласем тума пуçларĕ.

Артель хăйĕн производствине куллен-кунах сарса пырать. Халĕ кунта тир тăваççĕ, çĕвĕ çĕлеççĕ, йĕлтĕрсем тăваççĕ т. ыт. те.

Эпир пĕр кивелерех панă пӳрте пырса кĕретпĕр. Унта пысăк чан ларать. Чан ăшне тирсене йӳçĕтме тултарса хунă. Çакăнта ĕнтĕ кунĕн-çĕрĕнех Мухинпа Дионисов юлташсем, тир тăвакан стариксем, ĕçленине куратăн. Тир тăвас ĕç йывăр пулин те, вăл стариксем куллен-кунах нормăна 250—300 процент тултараççĕ. Мухин 70 çултан та иртнĕ. Çапах та ĕçре вăл хастарлă.

— Ывăнтăн пулĕ асатте, ларса кан-ха пăртак, — тесен вăл:

— Ларма вăхăт çук-ха, ĕçлес пулать. Хĕрлĕ Çар нимĕç оккупанчĕсене Мускав патĕнчен аяккалла хăваласа янине илтнипе чун савăнчĕ-ха. Ĕçлес Хĕрлĕ Çар боецĕсемшĕн. Часрах юнлă тăшмана пĕтерсе тăкчăр! — тесе ответлет.

Акă тата тепĕр килте çĕвĕ çĕлекен мастерской вырнаçнă. Кунта тунă тирсенчен ăшă тумтирсем çĕлеççĕ. Çĕвĕçсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 115 кĕрĕк-пиншак, 16 жилет, 148 мăшăр алса тулĕ тата ытти япаласем те çĕленĕ. Кунта уйрăмах М. Ильин çĕвĕç ятне асăнса хăвармалла. Вăл тăрăшнипе артель Хĕрлĕ Çар валли паха тумтирсем çĕлесе кăларать.

Кĕпе-йĕмсем çĕлекен мастерской 1941 çулта ноябрĕн 28-мĕшĕнче се ĕçлеме пуçланă-ха. Апла пулин те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли чылай кĕпе-йĕм çĕлесе панă. Çĕвĕçсенчен А. Смирнова юлташ кулленхи нормăна 300 процент, Никифоров юлташ 200 процент тултараççĕ.

Артель И. Чернов юлташа йĕлтĕрсем тума вĕрентекен курса ярса вĕрентнĕ. Халĕ вăл йĕлтĕрсем тăвас ĕçе ертсе пырать. Ялта йĕлтĕрсем тума пĕлекен ăста çук, ку ĕçе вĕренме 3 çамрăка илнĕ. Вăл çамрăксем йĕлтĕр тума лайăх вĕренсе çитрĕç. Уйрăмах И. Ермолаев çыпăçуллă та паха йĕлтĕрсем тăвать.

«Красный инвалид» промартель 1941 çулти производство программине ытлашшипех тултарчĕ. 1942 çулта татах та пысăкрах çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешет.

В. ВИКТОРОВ.

Пионерсемпе шкул ачисем кайăк-кĕшĕксем ӳстерсе параççĕ

ЕЛЧĔК. Елчĕк вăтам шкулĕнче вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем республикăри пионерсемпе шкул ачисене Хĕрлĕ Çар валли кайăк-кĕшĕксем ӳстерсе пама чĕнчĕç. Районри пионерсемпе шкул ачисем çак чĕнĕве хаваслăн кĕтсе илчĕç. Вĕсем халь Хĕрлĕ Çар валли чăх-чĕп, хур-кăвакал çитĕнтерсе самăртма тытăнчĕç.

Елчĕк вăтам шкулĕнче вĕренекенсен чĕнĕвне Аслă Таяпа шкулĕнче сӳтсе явнă хыççăн 52 пионер пĕрер чăх, 3 пионер пĕрер хур ӳстерсе пама пулнă Вĕсем халь чăхсемпе хурсене тăрантарса самăртма пуçланă. Кушкăри туллимар вăтам шкулта вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем 40 чăх тăрантарса самăртма тытăннă, пĕр пионер путек ӳстерсе парать. Çавăн пекех Кивĕ Эйпеçри пуçламĕш шкулта вĕренекен пионерсемпе шкул ачисем те ку ĕçе хутшăнса 27 чăх çитĕнтерсе самăртаççĕ. Çĕнĕ Эйпеçри пуçламĕш шкулта 8 пионер пĕрер чăх тăрантарса самăртма пуçланă.

Елчĕкри вăтам шкулта вĕренекенсем хăйсем 68 чăх, пĕр хур, пĕр кăвакал тăрантарса самăртаççĕ. Кунсăр пуçне кунта пĕр пионер путек ӳстерсе парать.

Елчĕк вăтам шкулĕнче вĕренекенсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă май, районри ытти шкулсенче те пионерсемпе шкул ачисем кайăк-кĕшĕксем тăрантарса самăртма пуçларĕç. Вĕренекен çамрăк патриотсем Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем валли аш-какай нумай хатĕрлесе параççĕ. Телейлĕ ачалăхăн хăрушă тăшманне—ирсĕр фашистсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

И. ПЕТРОВ.

Пĕлтерӳ

Паян, январĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункт залĕнче (Чувашская урамĕ, 6, Центральнăй библиотека) агитколлектив руководителĕсемпе докладчиксем валли инструктивнăй совещани пулать. Совещанин теми: «Нимĕç захватчикĕсен çаратăвĕсемпе ирсĕрлĕхĕсене хирĕç ответлесе, фронта пулăшассине вăйлатар».

Докладчикĕ—ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн лекторĕ **Н. П. Фролов.**

ВКП(б) Хула Комитечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 9 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.